

# Чăн геройăн 5 правили

Çурла, 17, 2023
Таван Ен
№ 32 (11189-11190)

## Манăçми Афганистан çĕрĕ



Проект ЧР Цифра министерстви пулăшнипе пурнăçланать

**«Ачаран манăн сывлăшпа десант çарне лекес килетчĕ. Çавна май 10-мĕш класра вĕреннĕ чухне юлташсемпе Шупашкарти аэроклуба парашютпа сикме çӳреттĕмĕр. Эпĕ висĕ хутчен сикнĕ. Çакна çирĕплетме свидетельство та панăччĕ», – пулни-иртнине куç умне кăларчĕ Янашкассинче пурăнакан Владислав Чумаков.**



1982 çул. В.Чумаков Юрий пиччĕшĕпе пĕрле

### ЭПĔ ВИЛМЕСТĔПЕХ…

Каччă 1980 çулхи кĕркунне çар ретне тăнă. Малтанах вĕсене Канашри ятарлă пункта пухнă. Хайĕн тĕллевне пурнăçлас тесе çар комиссарĕпе курнăçма шут тытнă чăваш ачи. Парашютпа сикнине, «Личное дело» документсен пуххинче свидетельство пуррине пĕлтернĕ ăна. Лешĕ, чăн та, документа шыраса тупнă, унăн сывлăхне тишкернĕ. Юлашкинчен вара чăваш каччипе килĕшнĕ вăл. Тăхтаса тăмасăрах 25 ачана Псков хулине ăсатнă, вĕсен йышĕнче Владислав та пулнă. 1-2 эрне салтаксен курсĕнче вĕреннĕ хыççăн «учебка» пуçланнă. «Пире ăçта кайма, мĕне валли хатĕрленине хамăр та пĕлмен эпир. Мĕншĕн тесен никам та пĕр сăмах та каламан. Кама водитель-механике, теприне командир пулма суйларĕç, виççĕмĕшне урăх специальноç пачĕç. Мана вара радиомеханик ĕçне шанчĕç, «учебкăна» Минска куçарчĕç. Эпир унта виççĕн лекрĕмĕр, вĕсенчен пĕри техникум пĕтернĕччĕ. Çур çул вĕреннĕ хыççăн каллех Псков хулине куçрăмăр. Унта пире пăшалтан пеме вĕрентрĕç, кашни кунах 5-10 çухрăм кросс чупаттăмăр. Çирĕп хатĕрлеве кура Афганистана ярасса туяттăмăр. Чăн та, пĕр каçхине тревогăпа вăратса патронсем, гранатăсем, типĕ апат-çимĕç пачĕç те самолетпа çула тухрăмăр. Пире ăçта илсе кайнине ун чухне те каламарĕç. Темиçе сехет вĕçнĕ хыççăн Кабулти аэродрома анса лартăмăр. Тӳрех чаççене пайлама тытăнчĕç: пирĕн вара 357-мĕш полка çитмелле. Çавна май машинăсене ларса Кабул хулине çула тухрăмăр. Унта специальноçе кура ротăсене пайлама тытăнчĕç. Радиоюсавçă пĕр çын çеç кирлĕ, эпир вара виççĕн. Мана аслă стрелокăн тивĕçне шанса пачĕç, тепĕр салтака водитель турĕç, вăл авторотăна лекрĕ. Çапла вара Афганистанра службă пуçланчĕ», – малалла тăсăлчĕ калаçу.

Кирек епле пулсан та вăрçă чун-чĕрене шиклентеретех çав. Владислав Иванович хăйĕн пăшăрханăвне кил-йышне пĕлтерес темен. Вăл ăçта лекнине пĕртăванĕсем каярах пĕлнĕ пулсан та амăшне каламан. Унăн чĕрине ыраттарас темен ывăлĕ. «Киле сывă таврăнасса чун-чĕрепе туйса тăраттăм. Вилместĕпех теттĕм хама хам, анчах суран пуласса кĕтнĕ. Çак шухăшпах хĕсмете кайнă эпĕ», – аса илет иртнине арçын. Çар операцийĕсене пĕрре мар хутшăннă. Малашлăха курса, туйса тăнăнах Афганистан çĕрĕнче йывăр аманнă вăл.



В.Чумаков

### ЧУН ВĔÇЕВĔ

«1982 çулхи çуркунне пире Панджер тăвне ярса илмешкĕн хатĕрлеме тытăнчĕç: пăшалтан пеме илсе çӳреççĕ, техникăна пăхса тăратпăр. Пĕррехинче строительство материалĕсем илме урăх хулана каймалла пулчĕ. Виçĕ машина тата вĕсемпе пĕрле хысалта, малта пĕрер çар машини çула тухрăмăр. Экипажра 7 çын. Ту çине хăпарнă чухне машинăсем «пăйлама пуçларĕç». КамАЗ аран-аран пырать. Çав вăхăтра малти техника урăх çулпа кайнине сиссе те юлаймарăмăр. Сăрт çинче пĕрпĕринпе калаçма сигнал çук. Эпир тепĕр çулпа кĕрсе кайрăмăр. Вĕсене çитес тесе васкатпăр хамăр. Сăртран тухма пуçланă вăхăтра тӳрĕ вырăна асăрхарăмăр, икĕ енĕпе – кишлак, варринче шыв юхса выртать. КамАЗ водителĕ машина хĕрнине, ăна «сивĕтмеллине» каларĕ. Кам витрепе, кам каскăпа шыв йăтма, машинăна сапма пуçларĕ. Пурте васкаççĕ, чарăнса тăма юраманнине лайăх ăнланаççĕ. Эпĕ БМВра ларатăп, аллăмра – пулемет. Салтаксене тухса пулăшма шухăшларăм, пулемета кăларса лартрăм. Çав вăхăтра çурăмран пуля лекрĕ. Эпĕ илтместĕп, анчах хама хам курма пуçларăм. Çӳлелле, çӳлелле хăпарса пыратăп пек. Тепĕр енне çаврăнтăм та унта питĕ илемлĕ: кайăксем юрлаççĕ, тӳпе те кăн-кăвак. Манăн нимĕн те ыратмасть, çӳлелле вĕçетĕп. Сасартăк хам пĕчĕк чухнехи самант кадр пек тухса тăчĕ, унтан шкул çулĕсем, салтака кайни… Çапла аманнă вырăна çитрĕм пек, броня çинче выртатăп. Унтан-кунтан пени илтĕнет. «Тепĕр пуля лексен пĕтетĕпех», – шухăшлатăп хам. Çĕре ӳкес тесе тăрăшатăп, анчах май килмест. Такам мана броня çинчен туртса антарчĕ, çăра юн тапса тухрĕ, ала-ура ĕçлемест», – йывăрпа аса илчĕ пирĕн герой.

Аманнă тепĕр салтакпа пĕрле чăваш каччине чаçе илсе çитернех. Салтаксем засадăна лекнине, вĕсем улттăн çеç юлнине пĕлтернĕ. Çавна май вĕсем патне пулăшу янă. Владислав Ивановича Кабулта операци тунă: пуля пĕр хулпуççирен лексе тепринчен тухса кайнă, кăштах ӳпкине, çурăм шăммине лекнĕ. Сипленме ăна Ашхабадри госпитале куçарнă, каярах килне янă. Ывăлĕ Афганистанра пулнине амăшĕ шăпах çакăн чухне пĕлнĕ те. Çурăмĕ çинчи суранĕсене курнă вăл.

### ЮРАТУ ТУЙĂМĔ ВИЛĔМРЕН ÇĂЛЧĔ

Сипленнĕ хыççăн каллех вăрçа каймă тивнĕ унăн. Паллах, пĕлĕшĕ-тăванĕпе уйрăлма çăмăл пулман. Афганистан çĕрĕ чун-чĕрене ĕмĕрлĕхех кĕрсе вырнаçнă тейĕн. «Малтанхи вăхăтра тĕлĕкре те курăнатчĕ. Çавна май йĕп-йĕпе тарпа вăранса каяттăм. Е тата урамри вăйлă сасăсем хăрататчĕç. Мĕн те пулсан шăплатсан çĕре выртма хатĕрччĕ эпĕ. Çурăм тăрăх сивĕ тар юхатчĕ. Çапла, Афганистан чуна витерчĕ», – терĕ Владислав Чумаков.

Салтакăн правилисем пирки те сăмах хускатрăм унпа. «Служба вăхăтĕнче пĕр-пĕрне пулăшаттăмăр, ытларах çар операцийĕсенче. Пеме пуçласан сăрт çинче: «Хӳтĕле!» – тесе кăшкăраттăмăр. Пĕри пенĕ вăхăтра тепри чул хыçне пытанатчĕ. Кăшт вăхăт иртсен тепри çапла кăшкăрать. Хĕсметре туслăх питĕ пĕлтерĕшлĕ. Манăн шухăшпа, çакă – чи кирли. Ахальтен мар пĕр-пĕрне хӳтĕлесе миçе салтак пуç хучĕши?» – лăпкăн каласрĕ вăл.

Иккĕмĕш правило салтакшăн – приказа вăхăтра тата тĕрĕс пурнăçлани.

Виççĕмĕшĕ – тирпейлĕхе пăхăнасси.

Тăваттăмĕшĕ – дисциплина çирĕплĕхĕ. «Тĕслĕх илсе кăтартас килет, – терĕ Владислав Иванович малалла калаçнă май. – Постра тăракан салтак пĕлĕшне йĕкĕлтесе: «Стой, перетĕп!» – тесе кăшкăрнă. Сисмесĕрех персе янă. Ача вăййи тейĕн. Нимĕн шухăшламан çĕртен салтак вилнĕ».

Çарта суя сăмах вырăнлă мар. Суйни хăвăрт çиеле тухать. Чаçре ун пек тума юрамасть. Çамрăк салтаксем ушкăна хутшăнсан кам мĕнлине тӳрех тавçăрма пулать.

«Салтака мĕн хавхалантарать-ши?» – кăсăклантăм эпĕ сăмаха пĕтĕмлетнĕ май. «Мана савнирен, тăван килтен çырусем илни хавхалантаратчĕ. Мĕн тери кĕтеттĕм эпĕ вĕсене?! Çитес çĕре часах çитейместчĕç. Вера (мăшăрăм) эпĕ çара кайнă чухне 10-мĕш класра вĕренетчĕ. Пĕр-пĕрин патне çырусем çыраттăмăр. Юрату мана вилĕмрен çăлса хăварчĕ пулĕ тесе шухăшлатăп халĕ тепĕр чухне. Мĕншĕн тесен юрату туйăмĕ вăл çынна хавхалантарать, пурăнма вăй-хал парать», – терĕ Владислав Иванович. Çавăн пекех салтаксене Тăван çĕршывшăн питĕ тунсăхланине те палăртрĕ вăл. «Ют çĕршывра хĕвел те хура», – теççĕ халăхра. Тăван тăрăхра вара тĕтĕм те тутлăрах тени тĕрĕсех çав.

■ **Валентина ПЕТРОВА**

● #ПĔРЛЕ

## Пачăшкă панă турăш ялан çумра

**«Отпуска хамăн çуралнă куна килтĕм – çурла уйăхĕн пиллĕкмĕшĕнче», – пуçланчĕ пирĕн калаçу Украинăри ятарлă çар операцине хутшăнакан Илья Павловпа. Вăхăт сисĕнмесĕр иртет, çак эрнере унăн çар ретне каялла таврăнмалла.**

Вăл мобилизаци резервĕн «Барс» проектĕнче тăнă. Ульяновск облаçне пухусене çӳренĕ. «Пĕлтĕр авăн уйăхĕнче Хусанти хатĕрленӳ центрĕнче пухăнтăмăр, ун хыççăн мобилизаци пуçланчĕ. Виçĕ уйăх хатĕрлентĕмĕр, раштав уйăхĕнче, Çĕнĕ çул умĕн, ятарлă çар операци иртекен зонăна илсе кайрĕç», – пĕлтерчĕ салтак. Пуйăспа вĕсем Донецк халăх республикине çитнĕ.

Карантай ялĕнчи Илья Павлов хĕсметре Самар облаçĕнче тăнă, водитель пулнă. Шупашкар округĕнчи ШĔМ уйрăмĕнче тăрăшнă, тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕсене хутшăннă, округри полици уйрăмĕн чысне хӳтелекĕ – самбо, йĕлтĕр ăмăртăвĕсенче. Чечняра командировкăра пулнă.

СВО зонинче вăл аслă стрелок. Кашни салтак пекех служба çинчен нумай каласа кăтартмасть. Блиндажсене штурмпа илнине пĕлтерчĕ ятарлă çар операцине хутшăнакан. «Донецк çыннисем хĕрес хурса çӳреççĕ. Хам та çавăн пекех хĕреспе çӳретĕп, кĕлĕсем вулатăп. Унсăрăн пулмасть. Висĕмçул Алькешри чиркĕве кайрăм, унта хреснаннепе пачăшккăсем çӳренĕ. Пачăшкă мана чĕнсе илчĕ те эсĕ çар çынни пулатăн терĕ, турăш пачĕ те ăна ялан пĕрле илсе çӳреме хушрĕ. Ун чух манăн пурнăç çар ĕçĕпе çыхăнасса пĕлмен те... Халĕ çав турăш ялан манпа пĕрле», – каласа кăтартрĕ Илья Павлов.

Отпуск вĕçленнĕ хыççăн вăл ятарлă çар операци зонине Чăрăшкассинчи пултарулăх çуртĕнче çыхнă маскировка сечĕсене илсе каять. Вĕсене çыхакансене тав тăвать. Сеткăсемпе пĕрле Хĕрарăмсен союзĕн Шупашкар муниципалитечĕн уйрăмĕ ăна ачасем салтаксене çырнă çырусемпе хайсен аллисемпе хатĕрленĕ талисмансем парса ярать.

■ **Анна КАШАЕВА**



Автор сăн ӳкерчĕкĕ

Илья Павлова ачасем çырнă çырусемпе талисмансем, маскировка сеткисем парса яраççĕ.